Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1944
ДЕКАБРЬ
19
ЫТЛАРИКУН
247(6742) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Кашни колхозăн çителĕклĕ вăрлăх пултăр

Колхозсенче халĕ 1945 çулхи çуракине хатĕрленес ĕç хĕрсе пыма тытăнать. Тимĕрçĕ лаççисенче мăлатук сассисем хытăрах та хытăрах илтĕнеççĕ. вăрлăх сортлакан машинăсем ытларах та ытларах кĕрлеççĕ, колхозсен хирĕсенче тислĕк куписем йышлăрах та йышлăрах курăнма тытăнаççĕ, колхозниксене агротехникăна вĕрентес ĕç вăйланнăçемĕн вăйланса пырать. Çакна ĕнтĕ ăнланмалла та, мĕншĕн тесен кашни кун, кашни сехет иртнĕçемĕн çураки вăхăчĕ ытларах та ытларах çывхарса килет.

Çуракине халех тимлĕн хатĕрленме тытăнакан колхозсемпе МТС-сем калама çук тĕрĕс тăваççĕ. Вĕсен кашни ĕçе тĕплĕн, пысăк пахалăхпа тума, çитменлĕхсене палăртса пĕтерме çителĕклĕ таранах вăхăт пулать. Килес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешме халех тытăнмалла та кашни ĕçе тĕплĕн туса пымалла, тепĕр майлă каласан, халĕ ĕçĕн пахалăхĕ çине ытларах çавăрăнса пăхмалла, хăвăртлăхсем хыççăн, процентсем хыççăн хăваламалла мар. Анчах çакă вăл çуракине хатĕрленес ĕç хăй тĕллĕнех пулса пырасса шанмаллине, тума май пур ĕçсенех вăрахах ярса пымаллине пĕлтермест. Пачах урăхла, халĕ вăхăт пур-ха, ĕлкĕрĕпĕр-ха, тесе ларни пысăк йăнăш пулĕччĕ. Çакна манаççĕ те ĕнтĕ Вăрмар районĕнчи хăш пĕр ертсе пыракан юлташсем. Вăрмар МТС-ĕ çуракине ытла та хăвăрт хатĕрленет тесе калама çук. Çапах та вăл, Çĕр-ĕç Халăх Комиссариачĕ пĕлтернĕ тăрăх, 14 трактор юсаса хатĕрленĕ. Анчах çак тракторсенчен пĕрне те государство комиссийĕ тĕрĕслесе йышăнман. «Елкĕрĕпĕр-ха, йышăнăпăр, ăçта васкас» текен шухăша ку районра пĕтермен пулас-ха. Халĕ вĕсем васкамаççĕ, анчах пахалăх çинчен те шухăшламаççĕ Кайран вара çав тракторсене пĕр тăрук тĕрĕслеме тытăнаççĕ те, государство комиссийĕн те васкавлăн тĕрĕслемелле пулать, çавна пула пысăк çитменлĕхсемех асăрхаймасăр юлма пултараççĕ; МТС дирекцийĕн те ун чухне палăртнă çитменлĕхсене тÿрлетес тĕлĕшпе васкамалла пулать, çавна пула ремонт пахалăхĕ начар пулма пултарать. Мĕншĕн-ха кашни трактора уйрăммăн, юсанă хыççăн пĕр тăхтаса тăмасăрах, тĕрĕслесе йышăнмалла мар? Государство комиссийĕн председателĕ каланă тăрăх, çав тракторсем хатĕррине вăл пĕлмен. Анчах ку вăл—сăлтав мар, ку вăл—çитменлĕх. Çак çитменлĕх вара акă мĕн çинчен калать: Вăрмар районĕнче çуракине хатĕрленес ĕçсен пахалăхĕ çине те, вĕсен хăвăртлăхĕ çине те çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ.

Килес çул вăйлă тырпул туса илме хатĕрленес ĕç йĕркеллĕ пулса пытăр тесен, вăл ĕçе малта пыракан колхозсен примĕрĕпе организацилемелле. Вăрнар районĕнчи Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз çуракине хатĕрленме тахçанах тытăннă ĕнтĕ. Килес çул вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе вăл Мускав облаçĕнчи «Победа» колхозпа ăмăртса ĕçлет. Ăмăрту договорне алă пусса çирĕплетнĕ, пысăк обязательствăсем илнĕ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз килес çулта кашни гектартан вăтам шутпа 150 пăтран кая мар тырă туса илме пулнă. Колхоз хăйĕн обязательствине пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешме тытăнчĕ. Вăрлăхсене хатĕрлес, хире тислĕк кăларас, ялхуçалăх машинисене юсас ĕçсем кунта хĕрÿллĕн пулса пыраççĕ, колхозниксем агротехникăна вĕренеççĕ. Вĕсем ăмăртура мала тухма ĕмĕтленеççĕ. Çак паха пуçарăва пур колхозсен те йышăнса илмелле, килес çулхи вăйлă тырпулшăн халех социализмлă ăмăртăва тухмалла.

1945 çулта тухăçлă тырпул пухса илес енĕпе халĕ тумалли чи кирлĕ ĕçсенчен пĕри вăл — вăрлăх çителĕклĕ таран хатĕрлесе хурасси пулать. Çак ĕç республикăра лайăх пулса пырать тесе калама пултараймастпăр-ха. Декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне вăрлăх хывмалли плана Вăрнар районĕ кăна пултарса çитернĕ. Вăрлăх хывса çитермелли срокĕсем иртсе кайрĕç пулин те, нумай районсенче çак ĕçе çурри чухлĕ кăна пурнăçа кĕртнĕ. Техникăллă культурăсемпе куракăсен вăрлăхĕсене хатĕрлесси уйрăмăнах начар пулса пырать. Мĕнпе ăнлантарса памалла-ха çакна? Пĕр енчен, районсенчи ертсе пыракан работниксемпе колхоз председателĕсем чылайĕшĕ çак чăнлăха шута илмеççĕ: государство кашни колхоза мĕн тата мĕн чухлĕ акмаллине кăтартса задани панă, ăна пирĕн кирек мĕнле пулсан та пурнăçа кĕртмелле, вăл задание пурнăçа кĕртмесĕр хăварма никам та пултараймасть. Çавăнпа та колхоз çĕрне акса хăварма пирĕн наян-и, ыран-и,—пурпĕрех вăрлăх тупса хатĕрлемелле. Апла пулсан, мĕншĕн-ха вăл ĕçе вăраха ярса пырас? Паллах ĕнтĕ, колхоз мĕн чухлĕ хăвăртрах тата мĕн чухлĕ пахарах вăрлăх хатĕрлесе хурать, вăл вăйлă тырпул туса илесси çине çавăн чухлĕ ытларах шанма пултарать. Тепĕр енчен, хăшпĕр колхозсен руководителĕсем вăрлăх валли государствăран е ытти çĕртен тырă илме ĕмĕтленеççĕ. Çакă вăл сиенлĕ шухăш. Халĕ, тăшмана хирĕç татăклă çапăçусем пуçланас вăхăтра, государствăран илесси çинчен мар, государствăна парасси çинчен ытларах шухăшламалла. Çавăн пек руководитель кăна чăн-чăн патриот пулма пултарать. Çавăнпа ĕнтĕ кашни колхозăн, хăйĕн шалти майĕсемпе усă курса, вăрлăх фончĕ хывса çитермелле. Ку енĕпе вара колхозсем пĕр-пĕринпе вăрлăх улăштарса илес ĕçе организацилени пысăк вырăн йышăнса тăрать. Санăн сĕлĕ вăрлăхĕ çитмест, анчах ыраш вăрлăхĕ ытлашшипех пур; çав вăхăтрах кÿршĕсен ыраш çитмест, сĕлĕ ытлашшипех пур. Калаçса татăл та улăштарса ил, анчах вăл ĕçе вăраха тăсса ан пыр. Районсенчи çĕрĕç пайĕсен колхозсем пĕр-пĕринпе вăрлăх улăштарса илес ĕçе организацилесе ертсе пырас пулать.

Вăрлăх фончĕ хывса çитерме пултарайман колхозсенче пирĕн колхозниксен пĕлтĕрхи патриотла пуçарăвне кăçал та аплăн сарса яни кирлĕ. Шупашкар районĕнчи «Урожай» колхоз членĕ Василий Егоров пĕлтĕр вăрлăх валли хăйĕн колхозне 132 пăт тырă кивçен панă. Унăн примерне ытти колхозниксем те пысăк кăмăлпа йышăнса илчĕç. Çак паха та патриотла пуçарăва кăçал та çине тăрса сарса ярасси—колхоз председателĕсен тата партипе комсомол организацисен чылай задачи пулса тăрать.

Вăйлă тырпул туса илме вăрлăх çителĕклĕ пулни кăна мар, вăрлăх лайăх пахалăхлă пулни тата ăна лайăх сыхласа усрани кирлĕ; урăхла каласан, вăрлăх таса та шултăра пулмалла, лайăх шăтмалла. Çавăн пек вăрлăх аксан кăна тухăçлă тырпул пухса илме пулать. Апла пулин те, республикăра вăрлăхсене сортласа тасатас тата вĕсен шăтаслăхне тĕрĕслес ĕç питĕ ерипен пулса пырать-ха, ăна тĕпренех вăйлатмалла. Вăрлăх тасатмалли машинăсем халĕ ахаль лармалла мар, вĕсем хĕрÿллĕн ĕçлемелле. Машинăсем çук çĕрте аласемпе алас тата хăш пĕр культурăсене алăпа суйлас ĕçе пуçармалла. Ку тĕлĕшпе Вăрмар райçĕрĕç пайĕн пуçарăвне ырлама пулать. Машинăсем çук колхозсем валли кунта вăрлăх сортлакан обозсем организациленĕ, çав обозсене вăрлăх тасатмалли тĕрлĕ машинăсем панă. Обозсем, колхозран колхоза çÿресе, вăрлăх тасатма пулăшаççĕ. Калас пулать, çак ĕç ытти районсенче те пысăк усă пама пултарать.

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешес ĕçе вăйлатса пынă май, иртнĕ çураки вăхăтĕнчи хăшпĕр йăнăшсенчен сыхланас пулать. Ун чухне чылай колхозсем ака вăхăчĕ çитсен тин васкасах вăрлăх хатĕрлеме тытăнчĕç, çавна пула ака ĕçĕсене вăраха ячĕç, кайран вара начар тырпул пухса илчĕç. Çакна, пуринчен ытла, юлса пыракан колхозсенче курма пулчĕ. Пĕлтĕрхи йăнăш кăçал ан пултăр тесен, парти райкомĕсемпе райисполкомсен юлса пыракан колхозсене ака вăхăчĕ çитсен мар, шăпах халĕ пулăшмалла, вăрлăх хывса çитерес ĕçре те, ăна тасатас ĕçре те, çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ытти ĕçсенче те пулăшмалла.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Франци Республики пĕр-пĕринпе союзлă пуласси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен договор туни çинчен

Де Голль генералпа Бидо господин Мускавра пулни çинчен Совет Союзĕпе Франци пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре каланă пек, декабрĕн 10-мĕшĕнче Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Франци Республики пĕр-пĕринпе союзлă пуласси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă договор çине алă пуснă.

Договора Кремльте СССР Верховный Совет Президиумĕ хушнипе СССР Ют Çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов тата Франци Республикин Вăхăтлăх Правительстви хушнипе Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Ж. Бидо алă пуснă.

Договор çине алă пуснă çĕрте СССР енчен çаксем пулнă: СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ В. Г. Деканозов, Совет Союзĕн Францири Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ А. Е. Богомолов, СССР Наркоминделĕн Европăри 1-мĕш Отделĕн Заведующийĕ М. Г. Сергеев, СССР Наркоминделĕн Право Отделĕн Заведующийĕн Помощникĕ С. Т. Базаров.

Франци Республики енчен Договор çине алă пуснă çĕрте çаксем пулнă:

Франци Республикин Вăхăтлăх Правительствин Председателĕ де Голль генерал, Наци Оборони Штабĕн Начальникĕ Жюен генерал, Франци Республикин Вăхăтлăх Правительствин СССР-ти представителĕ Гарро господин, Франци Республикин Вăхăтлăх Правительствин Председателĕн Гражданла Кабинечĕн Начальникĕ Г. Палевский господин, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерствин Политика Департаменчĕн Директорĕ М. Дежан господин.

Аяларахра Договор текстне пичетленĕ.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Франци Республики пĕр-пĕринпе союзлă пуласси тата пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен тунă

ДОГОВОР

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совет Президиумĕ тата Франци Республикин Вăхăтлăх Правительстви,

Германие хирĕç пыракан вăрçа пĕрле вĕçне çитиччене туса пыма тăрăшса,

Тăшмана çĕнтерни хыççăн çирĕп никĕс çинче мир тăвасси тата ăна нумай вăхăт хушши сыхласа пурăнасси икĕ Çĕршывпа Пĕрлешÿллĕ Нацисем хушшинче çирĕп çыхăну пулнинчен килет тесе шутласа,

Пĕтĕмĕшле мире çирĕппĕн тытса пыма тата тĕрлĕ нацисене пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнтарма пĕтĕм тĕнчери хăрушсăрлăх системине йĕркелес ĕçре пĕрле ĕçлеме йышăнса,

Германие хирĕç пыракан вăрçăра пĕрле кĕрешес пирки 1941 çулхи сентябрĕн 20-мĕшĕнче пĕр-пĕрин патне янă çырусенчен тухса тăракан обязательствăсене çирĕплетсе хурас тесе,

СССР-па Франци пĕр-пĕринпе союз туни икĕ халăхшăн та кирлĕ пулнине, вăл вăрçă вăрçма, мир тума тата Пĕрлешÿллĕ Нацисем лартнă тĕллевсем тăрăх экономикăна ура çине тăратма кирлĕ пулнине шанса тăрса,

Çак договора çырса алă пусма шутларĕç, хăйсен уполномоченнăйĕсем пулма çаксене уйăрчĕç:

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ Вячеслав Михайлович Молотова, ССР Союзĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне;

Франци Республикин Вăхăтлăх Правительстви Жорж Бидона, Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрне;

Çаксем вара, хăйсен полномочийĕсене пĕр-пĕринпе улăштарса, вĕсене тивĕçлĕ формăпа çырнă тесе шутласа, çакăн пирки калаçса татăлчĕç:

1-мĕш статья

Калаçса татăлакан икĕ Аслă Çĕршыв, пĕр-пĕрин майлă тата Пĕрлешÿллĕ Нацисем майлă пулса, Германие пĕтĕмпех аркатса тăкаччен вăрçаççĕ. Калаçса татăлакан икĕ Аслă Çĕршывран кашниййĕ тепĕрне çак вăрçăра хăй аллинчи пур майсемпе те пулăшса тăма сăмах парать.

2-мĕш статья

Калаçса татăлакан Аслă Çĕршывсем Германипе пĕччен калаçу пуçлама е пĕр-пĕринпе килĕшмесĕр гитлерла правительствăпа та, Германи агрессине малалла туса пыма Германире туса хунă урăх правительствăпа та перемири е мирлĕ договор тума килĕшмеççĕ.

3-мĕш статья

Калаçса татăлакан Аслă Çĕршывсем Германие хирĕç пыракан хальхи вăрçă пĕтсен те Германи пуçарса яма пултаракан кирек мĕнле хăрушлăха пĕтерсе лартмашкăн та пĕрле кирлĕ мерăсем йышăнма пулаççĕ. Германие çĕнĕ агресси пуçарса яма хăтланма май паракан кирек епле ĕçсене те чарса лартма пулаççĕ.

4-мĕш статья

Калаçса татăлакан икĕ Аслă Çĕршывран хăшин те пулин Германие хирĕç вăрçмалла пулса тăрсан (вăл вăрçă Германи агрессийĕ пирки пуçланĕ-и е çÿлте кăтартнă 3-мĕш статьяра палăртнă ĕçсемпе çыхăнса тăрĕ-и) тепĕр çĕршыв ăна çийĕнчех мĕн вăй çитнĕ таран пулăшма пулать.

5-мĕш статья

Калаçса татăлакан Аслă Çĕршывсем иккĕшĕнчен пĕрне хирĕç пыракан пĕр-пĕр союза е коалицие хутшăнмалла мар.

6-мĕш статья

Калаçса татăлакан Аслă Çĕршывсем вăрçă хыççăн та икĕ çĕршыва аталантарассине хăвăртлатас тата пĕтĕм тĕнчери пурнăçа лайăхлатма пулăшас шутпа пĕрне-пĕри пур майпа та экономикăллă пулăшу пама килĕшеççĕ.

7-мĕш статья

Çак Договор икĕ Çĕршыв ку таранччен пичетлесе кăларнă договорсем тăрăх хăйсем çине виççĕмĕш государствăсем пирки илнĕ обязательствăсене нихăш енчен те пырса тĕкĕнмест.

8-мĕш статья

Çак Договорăн вырăс чĕлхипе тата французчĕлхипе çырнă текстĕсем пĕр пекех шутланаççĕ. Çак Договора мĕн май килнĕ таран хăвăртрах ратификацилемелле, ратификациленĕ грамотăсене вара Париж хулинче пĕр-пĕринпе улăштармалла.

Ратификаци грамотисене улăштарса илнĕ хыççăн Договор пурнăçа кĕрет, вăл 20 çула пырать. Договор срокĕ тухиччен пĕр çул маларах Аслă Çĕршывсенчен пĕри тепĕрне çав Договора пăрахăçласси çинчен пĕлтермесен, вăл малалла паллă мар срока тăсăлать. Калаçса татăлакан икĕ Аслă Çĕршывран пĕри çав Договора пăрахăçа кăларасси çинчен пĕр çулталăк маларах пĕлтерсен, Договор пăрахăçа тухать.

Çаксене çирĕплетсе, çÿлте асăннă Уполномоченнăйсем çак Договор çине алă пуснă тата ун çине хăйсен пичечĕсене пуснă.

Çак договора Мускавра икĕ экземпляр хатĕрленĕ.

1944 çулхи декабрĕн 10-мĕшĕ.

СССР Верховный Совет Президиумĕ хушнипе
В. МОЛОТОВ.

Франци Республикин Вăхăтлăх Правительстви хушнипе
БИДО.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ДЕКАБРĔН 16-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 16-мĕшĕнче Венгрире пирĕн çарсем МИШКОЛЦ хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре ШАРОШ-ПАТАК хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 30 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ВИТАНЬ, ФЕЛШЕ РЕГМЕЦ, РУДА БАНЬЯЧКА, АБАУЙСАНТО, ФАРРУ, ФАНЧАЛ, ФАЙ, ФЕЛШЕ-ГАДЬ, СОСФА, БАРАКОНИ, МАРТОНИЙ, САЛОННА, ФЕЛШЕ ТЕЛЕКЕШ ялĕсем тата АБАУЙСАНТО, САЛОННА чугун çул станцийĕсем.

Декабрĕн 15-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн çарсем МИШКОЛЦ хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре нимĕçсемпе венгерсен 810 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусем пулман.

Декабрĕн 15-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 11 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 58 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ХĔРЛĔ ЯЛАВЛĂ БАЛТИКА ФЛОЧĔН НИМĔÇСЕН 3 МИНОНОСЕЦНЕ ТАТА 6 ТИНЕС-ÇАР ВАЙĔСЕМПЕ АВИАЦИЙĔ ТРАНСПОРТНЕ ШЫВА ПУТАРНĂ

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн тинĕс-çар вăйĕсем декабрĕн 12-мĕшĕнче Балтика тинĕсĕнче нимĕçсен 3 миноносецне шыва путарнă. Çав миноносецсенчен иккĕшĕ 1.800-шер тонна тайнă. Çак миноносецсен кашнин çакăн пек хĕçпăшал пулнă: 150 миллиметрлă тупăсем—5.37 миллиметрлă тупăсем—4. торпеда яракан аппаратсем—8. Кашни миноносец çинче 300 çынтан тăракан команда пулнă. Виççĕмĕш миноносец 600 тонна тайнă; ун çинче 150 миллиметрлă тупă—1.37 миллиметрлă тупăсем—2, торпеда яракан аппаратсем—6 пулнă. Миноносец командинче 130 çын пулнă.

Совет карапĕсем шыв çинчен çав путарнă миноносецсен 200 матросĕпе офицерне пуçтарса тыткăна илнĕ.

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ декабрĕн 14-мĕшĕнче тăшманăн Либава портĕнче тăракан транспорчĕсене пырса çапнă. Бомбăсем пăрахнипе пула, нимĕçсен пĕтĕмĕшпе 24.000 тонна таякан 6 транспортне шыва путарнă тата 5.000 тонна таякан тепĕр транспортне сиенленĕ.

ДЕКАБРĔН 17-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Декабрĕн 17-мĕшĕнче пирĕн çарсем Венгрири МИШКОЛЦ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре çаплах наступлени туса пынă, ПУТНОК хулипе чугун çул станцине тытса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ВАМОШ-УЙФАЛУ, ТОЛЬЧВА, ЕРДЕ-ГОРВАТИ, ЕРДЕ-БЕНИЕ, БОРОКЕ-ВАРАЛЬЯ, ВИЖОЛИ, АЛШО-НОВАЙ, ПЕРКУПА, РАГАЛЬ, КЕЛЕМЕР, ШАЙО-НЕМЕТЬ, СУСА, ШАТА, ВИШНИО ялĕсем тата ЛИССКА-ТОЛЬЧВА, БОРОДКЕ-ВАРАЛЬЯ, КОРЛАТ-ВИЖОЛИ, БАКСАЛЛАШ чугун çул станцийĕсем.

БУДАПЕШТ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем ПАСТО хулипе чугун çул станцине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, МАТРАС-ВИЛЕШ, КИШ-БАРКАНЬ, ФОТ, МАДЬОРОД ялĕсене йышăннă.

Декабрĕн 16-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче МИШКОЛЦ хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем нимĕçсемпе венгерсен 1.150 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Декабрĕн 16-мĕшĕнче пирĕн çарсем нимĕçсен 14 танкне çĕмĕрсе тăкнă.

☆ ☆ ☆

Венгрире, Мишколц хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем 10 километр таран малалла кайнă. Путнок хулипе чугун çул станцийĕ патнелле пымалли çулсем çинче тăшман совет чаçĕсене хирĕç уйрăмах хытă тăнă. Нимĕçсем унта малтанах лайăх позицисем туса хатĕрленĕ, çав позицисене танксене чарма алтнă тарăн шăтăксем тата темĕн чухлĕ минăсем лартса тултарнă вырăнсем хÿтĕлесе тăнă. Пирĕн çарсем Путнок хулине çавăрса илнĕ те ăна хÿтĕлекен тăшман гарнизонне хаяр çапăçура пĕтерсе тăкнă: тăшманăн 600 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, нимĕçсен 8 танкĕпе хăй тĕллĕн çÿрекен туппине çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, совет çарĕсем халăх пурăнакан 40 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—Венгрипе Чехословаки чиккинчи Суса ялне. Нимĕçсенчен 9 тупă, 33 пулемет, 30.000 патрон ытла, 6.000 граната тата ытти трофейсем те тытса илнĕ.

* * *

Будапешт хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем тăшмантан аякран иртсе кайнă та Пасто хулине хÿтĕлекен гитлеровецсен тылне тухнă. Пехотинецсем тата кавалеристсем тăшмана аркатса тăкнă, гитлеровецсем ним йĕрки-пăллисĕр каялла чакнă. Пасто хулипе чугун çул станцийĕнче трофейсем нумай тытса илнĕ. Будапешт патнелле пымалли çулсем çинче совет чаçĕсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та Фот ялне туртса илнĕ. Ку ял Будапешт хулинчен 10 километрта ларать, нимĕçсем вăл ялтан хăйсен оборонин вăйлă çирĕплетнĕ узелĕ туса хунă пулнă. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен темиçе çĕр вилли тата çĕмĕрсе тăкнă техникăпа хĕçпăшал нумай выртса юлнă.

* * *

Балтика тăрăхĕнчи 1-мĕш фронтра пирĕн авиаци тăшман аэродромĕсене тата Либаври çар портне тапăннă. Совет истребителĕсем нимĕçсен аэродромĕсене хупăрласа илнĕ те тăшманăн пĕр истребительне те çÿлелле вĕçсе улăхма паман. Çав вăхăтра пирĕн бомбардировщиксемпе штурмовиксем нимĕçсен çĕр çинчи самолечĕсем çине бомбăсем пăрахнă, çавăн пекех тата тупăсемпе, пулеметсемпе пенĕ. Çапла вара тăшманăн 19 самолетне пĕтерсе тăкнă. Бомбăсем пăрахнипе пула, Либава портĕнче нимĕçсен çар карапне тата виçĕ транспортне шыва путарнă. Порт территорийĕнче пушарсем тухнă, пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

* * *

Хĕвелтухăç Пруссире тăшман хутрансен тупăсемпе тата минометсемпе персе тăнă. Пирĕн авиаци Лазденен, Ангербург, Летцен тата Тройбург чугун çул станцийĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем нумайĕшĕ нимĕçсен çар склачĕсем, чугун çул станцийĕсен çуртĕсем тата чугун çулсем çине тÿрех пырса ÿкнĕ. 11 паровоз тата 45 вагон пĕтнĕ. Унсăр пуçне тата тăшманăн икĕ чугун çул эшелонне вут тивертсе янă.

* * *

Остроленка хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре çĕрле пирĕн разведчиксен ушкăнĕ нимĕçсем тăракан вырăна кĕрсе кайнă. Совет боецĕсем, штыксемпе чиксе тата гранатăсем ывăтса, вунă гитлеровеца вĕлернĕ, 6 нимĕçе тыткăна илнĕ, вара хăйсен чаçне пĕр çухатусăрах таврăннă. Пĕр чаçри артиллеристсем тăшман персе тăракан темиçе вырăна пусарса лартнă тата гитлеровецсене пĕр батальона çити сапаласа янă.

* * *

Çурçĕр флочĕн авиацийĕ Баренц тинĕсĕнче нимĕçсен 3.000 тонна таякан транспортне шыва путарнă.

* * *

Венгерсен 2-мĕш танковăй дивизийĕнчи мотополкăн 2-мĕш батальонĕнчен тыткăна лекнĕ салтак Иозеф Больдович çапла каласа кăтартнă: «Нимĕçсем Венгрирен предприятисен оборудованине тата чĕртавар запасĕсене пурне те илсе каяççĕ. Туртарса кайма май килмен япаласене çĕре алтса пытарса хăвараççĕ. Нимĕç салтакĕсем мирлĕ халăха çаратаççĕ. Нимĕçсем уççăнах çапла калаççĕ: «Ку вăрçăра эпир аяла пулни курăнсах тăрать ĕнтĕ, халĕ пирĕн малалли пурнăçшăн тăрăшас пулать, хура кун валли ытларах япала хатĕрлесе хурас пулать»,— теççĕ. Пĕр ялта хресченсем пире, Венгри салтакĕсене, мирлĕ халăх хутне кĕменшĕн ÿпкелешрĕç. Салтаксем тÿрре тухма хăтланчĕç. Вара пĕр шап-шур сухаллă ватă старик ялти мĕнпур халăх умне тухрĕ те çапла каларĕ: «Сирĕн çинче Венгри салтакĕсен формине куратăп эпĕ, анчах та эпир сире ылханатпăр, мĕншĕн тесен нимĕçсем сирĕн аçăр-аннĕрсене, пиччĕрсемпе йăмăкăрсене çаратаççĕ, эсир çав нимĕçсемшĕн вăрçатăр», терĕ. Старик сăмахĕсем пирĕн чуна кĕрсе вырнаçрĕç. Çав кунах 2-мĕш батальонран Хĕрлĕ Çар енне 57 салтак куçрĕç».

Совет Союзĕпе Никарагуа республики хушшинче дипломатиллĕ тата консулла çыхăнусем пуçласа яни

Никарагуа республикин правительстви Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Никарагуа республики хушшинче дипломатиллĕ тата консулла çыхăнусем пуçласа яма тата пĕр-пĕрин патне чрезвычайнăй посланниксемпе полномочнăй министрсем яма сĕннĕ. Совет правительстви çав сĕнÿпе килĕшнĕ.

Çак ыйту пирки икĕ правительство пĕр-пĕринпе калаçса татăлнине пĕр-пĕрин патне нотăсем ярса çирĕплетнĕ. Çав нотăсене пĕр-пĕрне Мексико хулинче кăçалхи декабрĕн 12-мĕшĕнче панă. Совет Союзĕ енчен Мексикăри посол К. А. Уманский панă, Никарагуа республики енчен унăн Мексикăри посолĕ Лоренсо Геррерo господин панă.

ПУШХИРПЕ 3.000 КИЛОМЕТР ÇÜРЕНĔ

Çурçĕр Кзыл-Кум пушхирĕнче нумай вăхăт хушши çÿренĕ хыççăн экспедици Чимкента таврăннă. Çав экспедици 7 отрячĕ 3.000 километр ытла çÿренĕ. Вĕсем авалхи çăлкуçĕсен вырăнĕсене картта çине ÿкернĕ, куракăсен тухăçлăхне тата вĕсем мĕн чухлĕ тăрантарма пултарнине тĕпчесе çÿренĕ.

Çав отрядсем кĕтÿ çÿретмелли хĕллехи вырăнсене 1.600 пин гектар чухлĕ пăхса тухнă. Çав вырăнсем кĕтÿ çÿретме юрăхлине пĕлнĕ. Халĕ экспедици йĕрĕпе Кăнтăр Казахстанри колхозсен кĕтĕвĕсем кайнă. (ТАСС).

ТИНĔС ТĔПĔНЧИ НЕФТЬ

Бакура тинĕсрен нефть кăларакан трест тунă. Унăн задачи—Каспи тинĕсĕнче нефть тухакан шăтăксем чавса вĕсемпе усă курасси пулать. Геологи науки кăтартнă тăрăх, Каспи тинĕсĕн нумай вырăнĕсенче йышлă нефть вырăнĕсем пур. Трест халĕ нефть шыраса тупас ĕçсене пуçарса янă. (ТАСС).

ЛАЙĂХ ЙЫШШИ ÇĔРУЛМИ ЫТЛАРАХ ЛАРТАССИ

Вăрçă пуçланнăранпа колхозсемпе совхозсенче, подсобнăй хуçалăхсенче, рабочисемпе служащисен пахчисенче çĕрулми лартакан вырăн нумай ÿснĕ. Армян ССР-ĕ, Грузин ССР-ĕ, Мускав, Горький облаçĕсем тата ыттисем те çĕрулми лартакан вырăна ÿстерне çеç мар, вĕсем тата тухăçлăрах çĕрулми лартма пуçланă. Çав вăхăтрах хăшпĕр облаçсенче çĕрулми вăрлăхĕ лартса ÿстерес ĕç çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхман.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ—пысăк тухăçлă çĕрулми лартасси чи кирлĕ ĕç пулса тăрать, тесе йышăннă. Çитес виçĕ çул хушшинче колхозсемпе совхозсен лайăх йышши çĕрулми кăна лартма тытăнмалла. Ахаль çĕрулмине лайăх йышши çĕрулмипе улăштарас ĕçе организацилеççĕ. Лартнă çĕрулмине çулленех обязательнăй йĕркепе тĕрĕслемелле. РСФСР-ти, Украинăри тата Вăтам Азири республикăсенчи облаçсенчи колхозсене 1945—1946 çулсенче вăрлăхлăх çĕрулми лартма пĕтĕм çĕрулми лартнă вырăнăн 20 проценчĕ таран çĕр уйăрса хума ирĕк панă. Колхозсемпе совхозсен вăрлăхлăх çĕрулми лартмалли лайăх çĕрсене уйăрса хумалла, çав çĕр çинче агротехника хушнă пек лайăх ĕçлемелле.

Институтсенче, селекципе опыт станцийĕсенче тата наукăпа тĕпчев учрежденийĕсенче чи лайăх çĕрулмине суйласа илсе пырса, лартса ÿстерес ĕçе организацилеççĕ. Кашни облаçра вăрлăх ĕрчетекен вырăнсем тăваççĕ. Чи лайăх сорт çĕрулми лартса ÿстерекенсене селекционерсене премисем параççĕ. (ТАСС).

ГИМНАСТСЕН ПĔТĔМ СОЮЗРИ АМАРТĂВĔ

Ленинградран, Киевран, Тбилисирен, Одессăран тата ытти хуласенчен те Мускава паллă совет гимнасчĕсем пухăннă. Вĕсем çĕршыври чи лайăх гимнаст шутланмалли ăмăртăва хутшăнаççĕ. Совет Союзĕн 1944 çулхи абсолютнăй чемпионĕ ятне илме ăмăртăва 15 арçын тата 15 хĕрарăм хутшăнаççĕ. (ТАСС).

БЕРИНГ ЙĔРĔПЕ

Командор утравĕсенчен наукăпа тĕпчев экспедицийĕ таврăннă. Экспедицире Камчатка облаçĕнчи краеведени музейĕн научнăй работникĕсем пулнă. Вĕсем паллă çулçÿревçĕ Беринг пулнă вырăнта чавса пăхса çÿренĕ. Утрав çинче Беринг карапĕн команди пурăннă вырăнти складсене, землянкăсене тата истори енчен питĕ интереслă тĕрлĕ япаласем — чугун етрисем, бомбăсем, картечь, ишĕлнĕ карап ванчăкĕсем тупнă. Çавăнтах тата офицерсен хĕçпăшалĕсене те тупнă. (ТАСС).

Геологи экспедицийĕсем Ленинграда таврăннă

Ленинграда геологи экспедицийĕсем таврăннă. Вĕсем Ленинградпа Новгород облаçĕсенчи районсене тĕпчесе çÿренĕ. Кăçал вĕсем пуринчен ытла хуласене юсаса йĕркене кĕртме кирлĕ стройматериалсем выртакан вырăнсене шыранă. Ленинградпа Ораниенбаум участокĕнче тата Парголовски районра вĕсем минерал краскисем выртакан çĕнĕ вырăнсене вуна яхăн тупнă. Мрамор выртакан вырăнсене те тупнă, унта мрамор Ленинград валли çителĕклĕх пур. Тата кĕленче завочĕсемпе кирпĕч завочĕсене кирлĕ чĕртавар вырăнĕсене тупнă.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Вăрманта ĕçлекенсем хушшинчи политикăллă-массăллă ĕç

Пирĕн Вăрнар вăрманпромхозĕнче Вăрнар, Красноармейски, Калинино районĕсенчи колхозниксемпе колхозницăсем ĕçлеççĕ. Вĕсем, пуринчен ытла, общежитисемпе баракĕсенче пурăнаççĕ. Вăрманта ĕçлекенсен хальхи тапхăрти политикăллă лару-тăру çинчен вăхăтра пĕлтерсе тăрас, вĕсене малта пыракан опытне ĕçлеме хăнăхтарас тесе, политикăллă-массăллă ĕçе лайăх организацилесе пымалла. Çак ĕçре пирĕн вăрманпромхозри пуçламăш парторганизаци сахал мар ĕçсем туса ирттерет.

Парторганизацин агитколлективĕ пур, унта коммунистсемпе комсомолецсем 17 çын. Вĕсене политикăллă-массăллă ĕçе йĕркелесе пыма общежитисемпе баракĕсем çумне çирĕплетнĕ. Унсăр пуçне, рабочисене хаçат-журналсем вуласа пама, вĕсемпе калаçусем ирттерме мастерсемпе бригадирсенчен 20 çынна уйăрнă. Кăçал агитаторсем докладсем 25 хут, калаçусем 250 хут ирттернĕ, стена хаçачĕсен 10 номер, боевой листоксем 50 номер кăларнă. Амăртура мала тухакансене, палăртма хĕрлĕ плакатсем, стахановецсене палăртма кăтарту хăмисем тунă.

Халĕ агитколлектив хăйĕн пĕтĕм ĕçне Сталин юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен тунă докладне тĕпĕ-йĕрĕпе ăнлантарас патне малă организацилесе пырать. Çулпуç доклада ăнлантарас тĕлĕшпе пур общежитисенче те калаçусем ирттерĕç. Коммунистсемпе комсомолецсем вулăн кружок организациленĕ. Унта кĕске занятисем ирттерĕç.

Сталин юлташ докладне вĕренни май рабочисем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать. Рабочисем, вăрманта ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем, çулпуç доклачĕпе хавасланса, çĕнĕ обязательствăсем илеççĕ. Лучковăй пăчкăпа ĕçлекенсем Прокопьев, Ундрисов, Герасимов юлташсем кĕркуннехи тапхăрта 1000-шер кубометр вут хатĕрлесе пулчĕç. Социализмлă ăмăртура вăрман пункчĕсем те, мастерсен участокĕсем те пурте хутшăнаççĕ.

Нумай рабочисемпе колхозниксем хăйсен сăмахне чысĕпе пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Прокопьевпа Ундрисов юлташсем тата Герасимов юлташсем кулленех 7—8 кубометр вут хатĕрлеççĕ. Калинино районĕнчи «Бгоневик» колхоз членĕсем те нумайĕшĕсем нормăна ирттерсе тултараççĕ. Вăрман хатĕрленĕве Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхоз лайăх тĕслĕхсем кăтартать. Вăл кварталти плана ирттерсе тултарнă.

Вăрманта ялан ĕçлекен рабочисенчен комсомолецсемпе çамрăксен бригадисем организациленĕ. Вĕсем ĕç тухăçлăхне кулленех ÿстерсе пыраççĕ. Çапла, çамрăк вăрман пункчĕнчи Уткин юлташ ертсе пыракан бригада октябрь тата ноябрь уйăхĕсенчи плана 133 процент тултарнă, вăрманпромхоза куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялава илме тивĕçлĕ пулнă.

Пирĕн вăрманпромхозри политикăллă-массăллă ĕçе мĕнле организацилени çинчен нумай пулмасть ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ пирĕн парторганизаци ĕçне пăхса тухнă. Общежитисемпе бараксенче хĕрлĕ кĕтессем çителĕксĕр. Пурри те кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха. Культура инвентарĕсене çителĕксĕр. Политинформацисем, докладсем, калаçусем ирттерессине те нумай лайăхлатмалла.

Эпир халĕ ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ кăтартса панине тимлĕн пурнăçа кĕртсе пыратпăр. Вăрманта ĕçлекенсем хушшинчи политикăллă-массăллă ĕçе лайăх организацилеме тăрăшатпăр. Çакă вăл вăрман хатĕрлемелли плана вăхăтра тултарма кирлĕ условисенчен пĕри пулса тăрать.

Г. ШЕГУРОВ.
ВКП(б) Обкомĕн Вăрнар вăрманпромхозĕнчи парторгĕ.

Çĕнĕ çĕре куçса кайнă колхозниксем мĕн сыраççĕ

Пирĕн республикăри нумай колхозниксем кăçал çĕнĕ çĕре—Саратов облаçĕнчи Приволжски, Красноярски тата Марксовски районсене куçса кайрĕç. Çĕнĕ çĕре куçакансен малтанхи ушкăнĕ ноябрь уйăхĕнче çĕнĕ вырăна çитнĕ. Вĕсене колхозсенче, хаклă хăнасем пек, ăшă кăмăлпа йышăнса илнĕ, ĕçлеме тата пурăнма кирлĕ условисене пĕтĕмпех туса панă. Хăйсене мĕнле йышăнса илни çинчен Октябрьски районри Нишер ялсоветĕнчи колхозсенчен Саратов облаçĕнчи Приволжски районе куçса кайнă Зайцев, Фокеев, Авраменков тата Малинина юлташсем çапла çыраççĕ:

«Эпир çĕнĕ вырăна 1944 çулхи ноябрĕн 11-мĕшĕнче çитрĕмĕр. Пире райсовет исполкомĕ те, колхоз правленийĕ те питĕ ăшшăн кĕтсе илчĕç. Нумай тĕрлĕ кучченеçсемпе апатлантарчĕç, лайăх çуртсем пачĕç. Вĕсене пурне те штукатурка тунă, урайсемпе маччасене тата стенасене сăрланă. Кунти колхозсем питĕх те пуян. Халĕ эпир Атăл хĕрринче пурăнатпăр. Эпир пурте колхозсенче хамăр специальноçсемпе ĕçлеме тытăнтăмăр. Апатçимĕç енчен çул çинче пĕр чăрмав та курмарăмăр, продуктсем яланах вăхăтра парса тăчĕç.

Çĕнĕ çĕре куçакансемшĕн тимлĕн тăрăшнăшăн эпир Парти Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомне тата республикăри ытти организацисене тав тăватпăр. Çĕнĕ çĕрти пурнăç пирки кÿренместпĕр. Кăçал сентябрĕн 31-мĕшĕнче тухнă хаçатра çырнисем пĕтĕмпех тĕрĕс пулчĕç».

Колхозниксене Саратов облаçĕнчи районсене куçарса каяс ĕçе Йĕпреç, Комсомольски, Кувакино, Первомайски, Чкаловски тата Елчĕк райсовет исполкомĕсем ăнăçлăн ирттерчĕç. Асăннă райсовет исполкомĕсен работникĕсем колхозниксене çĕнĕ çĕре куçарас ĕçе государствăшăн кирлĕ ĕç вырăнне хурса туса пычĕç. Вĕсем, колхозниксем хушшинче çĕнĕ çĕре куçас ĕçĕн пĕлтерĕшĕ çинчен тĕплĕн ăнлантарса парса, çĕнĕ çĕре куçармалли плана вăхăтра пурнăçа кĕртме пултарчĕç.

Çав вăхăтрах хăшпĕр райсовет исполкомĕсем çĕнĕ çĕре куçармалли плана вăхăтра пурнăçлама татăклă мерăсем йышăнман. Çĕрпÿ, Калинино, Советски, Муркаш районĕсем çĕнĕ çĕре пĕр хуçалăх та куçарман-ха. Элĕк, Ишлей, Красноармейски, Вăрмар, Чурачăк, Шăхасан райсовет исполкомĕсем те начар ĕçлеççĕ. Вĕсем пурĕ те 5-шер хуçалăх кăна çĕнĕ çĕре куçарнă. Хăшпĕр райсовет исполкомĕсен председателĕсем хăйсем начар ĕçленине çĕнĕ çĕре куçса кайма кăмăл тăвакансем çук тенипе тÿрре кăларма пăхаççĕ. Ку тĕрĕс мар. Муркаш районĕнче çĕнĕ çĕре куçарма пĕр хуçалăх та тупман. Çав вăхăтрах вăл районри Шурча ялсоветĕнчи висĕ колхозник Саратов облаçне куçса каймалли йĕркесем çинчен пĕлме Шупашкара килнĕ. Çав ялсовет çынни Смирнов, хăйĕн çемьине çĕнĕ çĕре куçарма ыйтса, ялсовет исполкомне заявлени панă. Анчах та ялсоветĕ вăл заявленне халиччен те пăхса тухман.

Колхозниксене çĕнĕ çĕре куçарас ĕç хăй тĕллĕн пурнăçа кĕрсе пырасси çине шанма юрамасть. Райсовет исполкомĕсемпе ялсовет руководителĕсен вăл ĕçе тимлĕн ертсе пымалла. Çавăнпа пĕрлех колхозниксене çĕнĕ çĕре куçмалли йĕркесем, çĕнĕ çĕре куçакансене государство енчен паракан çăмăллăхсем çинчен анлăн ăнлантарса памалла.

Н. ЖУКОВ.

СУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА КĔТСЕ ИЛЕР!

Планран ирттерсе икĕ трактор юсанă

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 27 çул тултарни çинчен Сталин юлташ тунă доклада Вăрнар МТС-ĕн трактористсемпе трактористкисем хушшинче тĕплĕн сÿтсе-явни ĕçре çĕнĕ ÿсĕмсем тума пулăшрĕ.

Социализмлă ăмăртăва хутшăнса, МТС коллективĕ IV-мĕш кварталта тракторсене юсамалли плана срокчен тултарма обязательство илнĕччĕ. Халĕ трактористсемпе трактористкăсем панă сăмаха пурнăçларĕç. IV-мĕш кварталта 17 трактор юсамалла пулсан, декабрĕн 10-мĕшне 19 трактор юсанă. Ку ĕçре уйрăмăнах Петр Кузин юлташ ертсе пыракан 3-мĕш бригадăри трактористсемпе трактористкăсем — Смирнова, Пронькин, Храмкин юлташсем паха тĕслĕхсем кăтартса пачĕç. Вĕсем тракторсене юсамалли çулталăк планне 75 процент пурнăçланă ĕнтĕ.

А. ПЛАТОНОВ.
МТС-ри парторганизаци секретарĕ.

Вăрлăхсене сортланă çĕрте пур машинăсемпе те усă курмалла

ÇЕРПУ. (Хамăр корр.). Районри нумай колхозсем вăрлăх фондне çителĕклĕ таран тырă уйăрнă. «Ĕмĕт», «Новая жизнь», «Малалла», «КИМ», «Серп», «Красная Армия», Калинин, Буденный, Леваневский ячĕсемпе тăракан колхозсенче вăрлăх фондне пур тĕрлĕ тырăсене те çителĕклĕ хывнă. Вĕсене сортласа тасатас тĕлĕшпе ĕç ăнăçлă пырать. Анчах та, уйрăм культурăсемпе илсен, хăшпĕр колхозсенче вăрлăх хывса çитермен-ха.

Вăрлăх хывса çитерес тесен, тата 1224 центнер çĕрулми, 500 центнер пăрçа йышши тырăсем, 320 центнер хура тулă, 40 центнер курăк вăрлăхĕ кирлĕ. «Авангард» колхозра 136 центнер вăрлăх хывса çитермен, «Звезда» колхозăн 104 центнер, Ленин ячĕпе тăракан колхозăн 63 центнер хывмалла. Чапаев ячĕпе тăракан колхозра 46 центнер тулă хывса çитермен. Çак колхозсенче хывнă вăрлăхсене сортлас пирки те васкамаççĕ. Районра пурĕ 20 триер, 60 сортировка пур, вĕсенчен 12 триерпа тата 37 сортировкăпа кăна усă кураççĕ.

Вăрлăх тасатасси — паянхи ĕç. Çак ĕçе çĕрĕç органĕнчи работниксен, уйрăмăнах агрономсен, тивĕçлипе ертсе пымалла. Кашни колхоза тырă сортласа пĕтерес тĕлĕшпе уйрăм график туса памалла, вăл графика пурнăçланине контроллесе тăмалла.

Клевер вăрлăхне çителĕклĕ хатĕрлемелле

ШАХАСАН. Районри колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕç хĕрсе пырать. «Активист», «Герой», «Пинер», «Соревнование» тата Калинин, Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче вăрлăх фондне çителĕклĕ таран уйăрнă, çак кунсенчех сортласа пĕтереççĕ.

«Свобода» колхозра пăрçа тата тулă вăрлăхĕсене алăпа суйласа хунă.

Вăрлăхсене сортлас енĕпе «Звезда», «Первое мая», «Ильич», «Луч» колхозсем юлса пыраççĕ.

«1-ое Мая» колхозра вăрлăхсене пăсăласран начар сыхлаççĕ. Вăрлăх хунă складсене, лайăх питĕрмен пирки, юр кĕрет.

Кăçалхи çуркунне районра чылай колхозсен клевер вăрлăхĕ çитмерĕ. 1945 çул валли клевер вăрлăхĕ хатĕрлес ĕç те çителĕксĕр пырать-ха! «Ударник», «Звезда», «Свет» тата ытти колхозсенче клевера çапса шĕкĕлчеме тытăнман. Вăрлăх валли вырса пухнă клевер капанĕсем юр айне пулнă. 1945 çулта клевер акмалли плана тултарас тесен, халех клевера çапса тата шĕкĕлчесе пĕтермелле. Кашни колхозах хăйне валли çителĕклĕ клевер вăрлăхĕ хатĕрлемелле.

А. АНТОНОВ.

Де Голль генерал Парижа çитнĕ

ЛОНДОН, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, де Голль генерал Парижа çитнĕ.

Франци правительствин ларăвĕ

ПАРИЖ, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри радио пĕлтернĕ тăрăх, паян Парижра министрсен совечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура Российăран таврăннă министрсем—Франци республикин Вăхăтлăх Правительствин пуçлăхĕ де Голль генерал тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бидо пулнă. Министрсен совечĕн ларăвĕнче Франци Республикипе Совет Союзĕ пĕр-пĕринпе союзлă пуласси çинчен тата пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси çинчен тунă договора вуласа панă.

Министрсен совечĕн ларăвĕнче ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бидо сăмах тухса каланă. Хăйĕн сăмахĕнче вăл çакна палăртнă: Франци республикипе Совет Союзĕ хушшинчи договора çырса алă пусиччен Мускаври калаçусем пулса иртнĕ. Унта питĕ туслă, пĕр-пĕрне пĕлсе тата пур енчен те шанса калаçнă. Россия та, Франци те, хăйсен интересĕсем пĕр пеккине шута илсе, нумай ыйтусем пирки пĕр-пĕринпе пĕтĕмпех калаçса татăлчĕç, тенĕ.

Франци республикин министрсен совечĕ Франципе Совет Союзĕ хушшинче тунă килĕшĕве ырланă

ЛОНДОН, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Парижран пĕлтернĕ тăрăх, паян Франци республикин министрсен совечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура де Голльпе Бидо Франци республикипе Совет Союзĕ пĕр-пĕринпе союзлă пурăнасси тата пĕр-пĕрне пулăшса тăрасси пирки тунă килĕшÿ çинчен каласа кăтартнă. Министрсен совечĕ килĕшÿ тунипе кăмăллă пулнă. Çак килĕшÿ «Европа хăрушсăрлăхĕшĕн питĕ кирлĕ» пулса тăрать, тенĕ.

Официальнăй йĕркепе пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă: Франци республикипе Совет Союзĕ хушшинчи килĕшÿре «Пĕрлешÿллĕ Нацисемпе пĕрле çак вăрçăра çĕнтересси шĕн Совет Союзĕпе Франци пĕр-пĕринпе килĕшсе ĕçлесси çинчен, çавăн пекех тата Германин агрессиллĕ вăйĕсене пĕтерсе тăкса ирĕке кăларнă Европăна ура çине тăратас тĕлĕшпе килĕшсе ĕçлесси çинчен» каланă, тенĕ.

Çак эрнере Консультаци ассамблейинче çак килĕшĕве сÿтсе-яваççĕ. Сÿтсе-явнă çĕрте де Голль генерал та пулать.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ декабрĕн 16-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем Мариавейлер хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тăшмантан завод районне тасатнă, Шопховен хули çывăхĕнчи Кастеле туртса илнĕ.

Ламмерсдорф хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Кестерни хулине тăшмантан тасатаççĕ.

Саар шывĕ улăхĕнче тăшман союзниксен Саар шывĕ çинчи Диллинген тата Саарлаутерн хулисенчи укрепленисене тупăсемпе хаяррăн персе тăрать. Саргемюнд хулинчен хĕвелтухăçнерехре тăшмантан Габкирхен хулине тасатаççĕ. Союзниксен çарĕсем Нидер Гайльбах тата Эрхинген хулисене кĕрсе кайнă.

Анатри Вогез тăвĕсенчен хĕвеланăçнерехре тăшман, Мажино линийĕн укрепленийĕсемпе усă курса, союзниксене хытă хирĕç тăрать. Анатри Вогез тăвĕсен хĕвелтухăç енчи пайĕнче союзниксен çарĕсем Климбах хулинчен çурçĕртерехре Франципе Германи чикки урлă каçса кайнă. Климбах хулине тăшмантан тасатнă. Эльзас тÿпемĕнче союзниксем Селест хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре кăштах малалла кайнă.

Йывăр бомбардировщиксем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, ĕнер нимĕçсен Голланди çыранĕсем патĕнчи Эймейденри торпеда катерĕсемпе разведка катерĕсем тăракан вырăнсене тапăннă. Декабрĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем Людвигсхафен хулине йышлăн вĕçсе кайса хаяррăн тапăннă.

ЛОНДОН, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ декабрĕн 16-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Итали фронтĕнче Фаэнца хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре 8-мĕш арми чаçĕсем кунĕпех вăйлă çапăçнă хыççăн хăйсен позицийĕсене самаях лайăхлатнă.

Американецсен йывăр бомбардировщикĕсен соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, тăшманăн Австрири тата Германири стратегиллĕ 5 объектне тапăннă.

Англи бомбардировщикĕсем тăшманăн Югославири тата Çурçĕр Италири вăрçă объекчĕсене нумайĕшне пырса тапăннă.

ЛОНДОН, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен Верховнăй Командованийĕн штабĕ декабрĕн 17-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Союзниксен çарĕсем декабрĕн 16-мĕшĕнче Брахелен тата Мариавейлер хулисен районĕнче, Дюрен хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре, Роллесбройх хули патĕнче, Ретген хулинчен хĕвелтухăçнерехре, çавăн пекех тата Моншау хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри вăрманта тăшман тĕллĕн-тĕллĕн тунă йышлă контратакăсене сире-сире янă. Саар шывĕ улăхĕнче союзниксем Диллинген хулипе Саарлаутерн хули секторĕсенче тăшмана тапăнма тунă укрепление çине тăрсах аслăлатаççĕ. Саргемюнд хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре Габкирхен хули патĕнче союзниксем малалла кайнă, унтан хĕвелтухăçнерехре Герстхейм хули патне çитнĕ.

Анат Вогез тăвĕсенчен хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем тăшманпа хаяррăн çапăçа-çапăçа малалла куçнă, вĕсем халĕ Битша хули çывăхĕнче тăраççĕ. Унтан çурçĕр-хĕвеланăçнерехре союзниксем Хотвейлер хулине кĕнĕ. Рейн çывăхĕнче Франципе Германи чиккинчен кăнтăртарахра ларакан Виссенбург хулине тата Шейбенхард хулине йышăннă.

Союзниксен авиацийĕ тăшман объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

ЛОНДОН, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ декабрĕн 17-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Италире Çĕнĕ Зеланди дивизийĕн чаçĕсем хаяр çапăçнă хыççăн Фаэнца хулине йышăннă. Банья-Кавалло хулинчен çурçĕртерехре 8-мĕш армири Канада чаçĕсем тăшмана тапăнма Навильо каналĕ çинче тунă укрепление висĕ миля тăршшĕ фронтра хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Фаэнца хулинчен хĕвеланăçнерехре 8-мĕш армири Англи, Çĕнĕ Зеланди тата Инди чаçĕсем самаях малалла куçнă. Союзниксен çарĕсем Римини хулипе Болонья хули хушшинчи шоссе çулĕнчен хĕвеланăçнерехри районра сарлака фронтпа Сенио шывĕ патне çывăхарса пыраççĕ. 5-мĕш арми участокĕнче патрульсем тытăça-тытăça илнĕ тата тăшмана хирĕç тупăсемпе персе тăнă.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, декабрĕн 16-мĕшĕнче Германири, Австрири тата Чехословакири вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн Верховнăй штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Черногорире Югослави чаçĕсем Албани чаçĕсемпе пĕрле Тузи хулине йышăннă та фронтăн пĕтĕм тăлккăшĕпех Циевне шывĕ çине тухнă. Матешево хули тавра çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Матешево хулипе Мойковац хули районĕнче 10 кун хушшинче тăшманăн 3.450 салтакĕпе офицерне пĕтернĕ. Трофейсем нумай тытса илнĕ.

Босния шывĕ улăхĕнче çаплах çапăçусем пыраççĕ. Югослави чаçĕсем тăшманăн темиçе колоннине аркатса тăкнă та Добой хулипе Дервента хули хушшинчи чугун çул çине тухнă.

Хорватире нимĕçсемпе усташасен чаçĕсем хăйсен пысăк вăйĕсемпе Загреб хулипе Карловац хулинчен Писаровина хули еннелле наступлени пуçласа янă. Хаяр çапăçусем пыраççĕ. Çавăн пекех тата нимĕçсем Двор хулипе Костайница хули секторĕнчен те наступлени пуçласа янă.

Ликăра Югослави чаçĕсем нимĕçсен тĕреклетнĕ темиçе пунктне пĕтерсе тăкнă та тăшманăн Медак хулинче çавăрса илнĕ гарнизонне пĕтерсе тăкассишĕн çапăçаççĕ.

ПОЛЬШĂН ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ ТЕРРИТОРИЙĔНЧЕ ХАЛĂХА ВĔРЕНТЕС ĔÇ МĔНЛЕ ПЫРАТЬ

ЛЮБЛИН, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем Польшăран тухса тарнă чухне шкул çурчĕсене пурне те тенĕ пекех ишĕлтерсе хăварнă. Обществăллă организацисем, ачасен ашшĕ-амăшĕсем тата çамрăксем пулăшнипе хальхи вăхăтра шкул çурчĕсене нумайĕшне юсаса йĕркене кĕртнĕ. Ирĕке кăларнă территорире шкул çулне çитнĕ ачасенчен 35 процентĕ каллех вĕренме пуçланă. Çĕнĕрен 4.500 шкул уçнă, вĕсенче 700.000 ача вĕренет. 110 гимназипе лицейре занятисем пуçланнă, вĕсенче 30.000 çын вĕренет. Профессипе техника шкулĕсем нумай уçнă, вĕсенче 14.000 çын вĕренет. Занятисем çĕнĕ программăсем тăрăх пыраççĕ.

Демократиллĕ Польшăн пурнăçĕнче Люблинри, Варшавăри тата католиксен университечĕсене уçни пысăк ĕç пулса тăрать. Хальхи вăхăтра Варшавăри политехника институтне йĕркелесе ярас тĕлĕшпе малтанхи ĕçсене тăваççĕ. Польша республикин столицине ирĕке кăлариччен вăл институт Люблинра пулать.

ШВЕЦИ ХАÇАЧĔ ГЕРМАНИРИ ВАРТТАН ĔÇЛЕКЕН ОРГАНИЗАЦИ ÇИНЧЕН

СТОКГОЛЬМ, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтонбладет» хаçат çапла çырать: «Стокгольмри нимĕç ушкăнĕсенчен илнĕ хыпарсем тăрăх, нумаях пулмасть Гамбургра гестапо вăрттăн ĕçлекен организаци тупнă. Çав организаци майлă çынсем пĕтĕм Германийĕпех пур, теççĕ. Гамбургри верфьсенче тата тинĕс-çар флочĕн мастерскойĕсенче массăллă арестсем пулса иртеççĕ. Гамбургри полици çав организацин руководительне тăрăшсах шырать. Хулара пĕлтерÿсем çырса çапнă. Вăл пĕлтерÿсенче çапла каланă: кам та кам çав руководителе арестлеме пулăшакан хыпарсем парать, çавна 10.000 марка укçа тÿлеççĕ, тенĕ. Çунса кайнă пĕр çуртăн подвалĕнче çав организацин агитациллĕ материалĕсене тупнă. Организацин ячĕ «Сталинградла союз», мĕншĕн тесен, организаци членĕсемпе ун майлă тăракансем шутланă тăрăх, Сталинград хыççăн Германи вăрçă вăрçни преступлени пулса тăрать».

Лăпкă океан çинчи вăрçă

Америка çарĕсем Филиппин утравĕсем хушшинчи Миндоро утравĕ çине анни

ЛОНДОН, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешÿллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Америка çарĕсем Филиппин утравĕсем хушшинчи Миндоро утравĕ çине анчĕ. унăн кăнтăр çыранĕсем патĕнчи çуллĕ вырăнсене пурне те йышăннă. Десант антарас умĕн Америка флочĕпе авиацийĕ тăшмана хирĕç вăйлă çапăçнă. Çав çапăçусенче Филиппин утравĕсем çинчи аэродромсенче японецсен 250 самолетне пĕтерсе тăкнă.

Грецири лару-тăру

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 15-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Афины хулинчи корреспонденчĕ çакăн çинчен пĕлтерет: шанчăклă хыпарсем тăрăх, Англи влаçĕсем «Халăхăн ирĕклĕх фрончĕ» (ЭАМ) тăратнă сĕнÿсемпе килĕшсе перемири тăвĕç, тет. Корреспондент каланă тăрăх, вăл сĕнÿсенче тĕп пунктсем висĕ: политикăллă лидерсене амнисти парасси, пур партисенчен тăракан наци правительствине туса хурасси тата халăх монархие е республикăна кăмăлланине плебисцит туса палăртиччен çĕршыва тытса тăма регент советне туса хурасси.

ЛОНДОН, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Афины хулинче çакăн çинчен каланă: Англин Грецири хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ Скоби генерал ЭЛАС çарĕсен («халăхăн ирĕклĕх фрончĕн» çар организацийĕ») главнокомандующийĕнчен Стефан Сарафис генерал-майортан çыру илнĕ. Çав çырăва пичетлесе кăларассине шанаççĕ.

Афины хулинчи Англи посольстви пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Вăл пĕлтерÿре çапла каланă: Александер фельдмаршалпа пĕрле Афины хулине пынă Гарольд Макмиллан юлашки ик-виç кун хушшинче Грецин чылай деятелĕсемпе калаçнă, вăл шутра—Папандреупа, Софулиспа тата Греци архиепископĕпе. Хальхи вăхăтра Макмиллан Афины хулинче.

ЛОНДОН декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Скоби генерал пĕлтерĕвне панă. Унта çапла каланă: ĕнер иркхине партизансем Инди çарĕсене атакăланă, вĕсем Патрасран çурçĕртерехре тăраççĕ. Афины хулинче тата Пирейре вăхăтлăха чарăнса тăнă хыççăн çапăçусем каллех пуçланса кайнă. Пирейре артиллерирен персе тăнипе усă курса, партизансем Палерон заливĕн хĕвелтухăç пайĕнче тăракан Англи çарĕсене хирĕç атака пуçласа янă. Хаяррăн çапăçнă хыççăн атакăна сирсе пăрахнă. Салоникăра партизансем хастарлăн кĕрешеççĕ.

Агентство пĕлтернĕ тăрăх, Грецие Англи çарĕсем валли пулăшу пырсах тăрать, вăл шутра—танксем тата артиллери. Агентство çапла хушса хурать: «Çар экспертчĕсем шутланă тăрăх, çак пулăшу Англи çарĕсене çывăхри вăхăтрах наступлени пуçласа яма май парĕ», теççĕ.

ЛОНДОН, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио паян ирхине пĕлтернĕ тăрăх, Афины хулинче çапăçусем çаплах пыраççĕ.

ЭЛАС-ăн Центральнăй комитечĕ (ЭЛАС —«Халăхăн ирĕклĕх фрончĕн» çар организацийĕ) хăйĕн çарĕсене вăхăтлăха Афины хулинчен тата Пирейрен кăларма килĕшнĕ. Çав вăхăтрах вăл правительство çарĕсене те кăларма тата жандармерие хĕçпăшалсăрлантарма хушнă. Скоби генерал çакăнпа килĕшмен. Ун шучĕпе ку килĕшÿсенче «вăхăтлăха» тенĕ сăмах килĕшÿллĕ мар. Скоби шухăшĕпе, ЭЛАС чаçĕсене Афины хулинчен кăларнипе çеç çитмест, вĕсене тата хĕçпăшалсăрлатмалла. Скоби генерал Сарафис генералран послани илнĕ. Çав посланире аккăлчансем Афины хулинче хĕçпăшаллă вăйсем тытса тăнине тата çав вăхăтрах вĕсем хĕçпăшалланнă грексене ахалех тăратса хăвармалла тăрăшнине хирĕç каласа çырнă. Скоби генерал хăй енчен Сарафиса айăпласа çырнă, эсĕ хăвăн сăмахна тытмарăн. Казетра (Италире) алă пуснă килĕшĕве пурнăçламарăн, тенĕ. Çав килĕшÿ тăрăх, Сарафис хăйĕн мĕнпур çарĕсене Греци правительствин генералĕсен аллине парса, вĕсене Скоби генерала пăхăнтармалла пулнă.

ХЕЛЬСИНКИРЕ ГИТЛЕРА ХИРĔÇЛĔ ВЫСТАВКА УÇНА

ХЕЛЬСИНКИ, декабрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Хельсинкире çак кунсенче оккупацилене çĕршывсенче гитлеровецсем тунă тискер ĕçсене кăтартакан фотоÿкерчĕксемпе документсен выставки уçăннă. Выставкăна «Финляндипе Совет Союзĕ ятлă общество организациленĕ.

ПОРКАЛА-УДДРА ЧИКĔСЕНЕ ПАЛАРТАКАН КОМИССИН ĔÇĔСЕМ ВĔÇЛЕННĔ

ХЕЛЬСИНКИ, декабрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). ССР Союзĕ Финляндирен тара илнĕ Поркала-Удд районĕн чиккине палăртас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси (Совет Союзĕпе Финляндин хутăш комиссийĕ) декабрĕн 16-мĕшĕнче хăйĕн ĕçĕсене вĕçлерĕ. Декабрĕн 18-мĕшĕнче совет делегацийĕ Мускава тухса кайнă. Делегацие çаксем кĕреççĕ: советник Александров (делегаци председателĕ), членĕсем: Арсеньев генерал-майор, Красковец полковник тата 2-мĕш рангри капитан Черный.

Чăваш АССР Прокуратуринче

Тăтăшах взяткăсем илнĕшĕн тата закон сăр тÿлеттерсе абортсем тунăшăн Чăваш АССР прокуратури Тăвайри врача Людмила Григорьевна Тимофеевăна арестлесе, уголовнăй йĕркепе ответ тыттарнă. Ĕçе тĕрĕслесе пĕтернĕ, ăна пăхса тухма суд аллине панă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Шупашкарти энергетика техникумĕнче техникум курсĕшĕн экстернат йĕркипе экзамен пама юрать.

Экзаменсене çак специальноçсемпе памалла: а) ЦЭС-сенчи дизель установкисем, б) ЦЭС-ăн теплотехника пайĕ, в) çуртйĕрсемпе усă курасси.

Экстернат йĕркипе экзамен пама вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене тата производствăра çав специальноçпа икĕ çултан кая мар ĕçленисене пурне те йышăнаççĕ.

Заявленисене çак адреспа памалла: гор. Чебоксары, ул Плеханова, 7. Заявленисемпе пĕрле çак документсене ямалла: а) миçе çул вĕреннине кăтартакан свидетельство, б) кадрсене учета илмелли листок, в) икĕ фотоÿкерчĕк.

Заявленисене çулталăкĕпех йышăнаççĕ.

3—2

Шупашкарти электромеханически техникумра техникум курсĕшĕн экстернат йĕркипе экзамен пама ыйтса çырнă заявленисене йышăнаççĕ.

Заявленисене вăтам шкулта çичĕ çултан кая мар вĕреннĕ тата производствăра икĕ çултан кая мар ĕçленĕ çынсенчен пуринчен те йышăнаççĕ. Заявленисене çулталăк тăршшĕпех йышăнаççĕ.

Адрес: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 82.

5—1.

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

Колхоз председателĕсен курсĕ

Шупашкара Ялхуçалăх институчĕ çумĕнче колхоз председателĕсен пĕлĕвне ÿстермелли пĕр уйăхлăх курс ĕçлеме тытăнчĕ. Курсра пурĕ 170 çын вĕренмелле, халĕ 141 çын пухăннă.

Курс программинче çакăн пек докладсемпе лекцисем пур: колхозри ĕçе организацилесси; ялхуçалăх артелĕн примерлă уставĕ; колхоз правленийĕнчи ĕçсене йĕркелесе пырасси; колхозри учетпа отчетность; тырă тухăçлăхне ÿстерессин тĕп задачисем; выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе çитес вăхăтра тумалли ĕçсем т. ыт. те.

Çак курсра докладсемпе лекцисене Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн специалисчĕсем, ялхуçалăх институчĕн профессорĕсемпе преподавателĕсем тата ВКП(б) Чăваш Обкомĕнче, Чăваш АССР Верховный Совечĕнче тата Совнаркомра ĕçлекен юлташсем вулаççĕ.

Çакăн пек пĕр уйăхлăх курссем кăçал çуракине тухиччен виççĕ пулса иртмелле. Вăл курссене пурĕ 650 колхоз председательне вĕрентсе кăлармалла.

КОЛХОЗ КАДРĔСЕН ВĔРЕНĔВĔ

Пăрачкав районĕнче колхозсенчи кадрсен пĕлĕвне ÿстерес шутпа тĕрлĕ курссем ирттереççĕ. Декабрь уйăхĕн пуçламăшĕнче висĕ çĕрте ревизи комиссисен председателĕсемпе членĕсен курсĕсем тата колхоз счетоводĕсен курсĕ пулса иртрĕç. Халĕ ферма заведующисен курсĕ ĕçлет. Малашне бригадирсен тата ытти работниксен курсĕсене ирттерме палăртнă.

Педагогика училищи учительсене пулăшать

Етĕрнери педагогика училищи районри учительсене пулăшас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерет. Кашни уйăхрах 7-мĕшпе 21-мĕшĕсенче училищĕри педагогика кабинетĕнче лекцисемпе докладсем тата консультацисем ирттереççĕ. Унсăр пуçне училищĕри преподавательсем уроксенче пулса учительсене методика тĕлĕшĕнчен пулăшаççĕ.

КОЛХОЗРИ ЭЛЕКТРОСТАНЦИ

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Пĕчĕк Маклашкинĕри «Красная Армия» колхоз 1940 çултах пысăк пĕве тунă. Ку тариччен унта шыв арманĕ ĕçленĕ тата шыв вăйĕпе авăн çапнă. Кăçал вара шыв вăйĕпе пысăк мар электростанци ĕçлеме пуçланă. Халĕ колхозниксен килĕсене электричествăпа çутатаççĕ.

УЛАТĂР ХУЛИН ДЕЛЕГАЦИЙĔ ГЕРОЯ САМОЛЕТ ПАМА КАЙНА

Улатăр хулинчи ĕçсыннисем хамăр земляк Совет Союзĕн Геройĕ А. Кочетов валли самолет илме укçа пухса панăччĕ. Унсăр пуçне Кочетов валли самолет илме Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз председателĕ Гаязов юлташ 110.000 тенкĕ панă.

Нумай пулмасть Улатăр хулинчи ĕçсыннисен делегацийĕ Совет Союзĕн Геройĕпе А. Кочетовпа пĕрле унăн чаçне самолет пама тухса кайнă.

Республика пурнăçне кăтартакан кино-журналсем

Эпир кино курма кайсан, час-часах экран çинче Чăваш республикинчи колхозсемпе предприятисен тата культурăна медицина учрежденийĕсен вăрçă вăхăтĕнчи ĕçĕсем çинчен калакан кино-журналсем куратпăр. Кăçал кинооператор С. Фрид юлташ пурĕ 22 журнал ÿкернĕ.

Çав журналсене пирĕн республикăра кăна мар, Атăл тăрăхĕнчи ытти республиксемпе облаçсенче те кăтартаççĕ.

Заводри спорт коллективĕ

Кăçал çулталăк пуçламăшĕнче, ВЦСПС йышăннă тăрăх, спорт коллективĕсен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвне организациленĕ. Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводри спорт коллективĕ, çав ăмăртăва хутшăнса, малти вырăна тухнă. Виççĕмĕш кварталти итогсем тăрăх, вăл коллектива виççĕмĕш премипе тата ВЦСПС грамотине панă.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместитель секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—39, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—?3.

НТ 04265 Типография № 1, Управления полиграфпро мышленности при СНК ЧАССР, Заказ . 2, ф. 6, 59Х42 . Тираж 16.000 экз.